**Ыран – Вăрман ĕçченĕсен кунĕ**

# Иртнине манмасăр çĕннине алла илетпĕр

**(Вĕçĕ. Пуçл 1-мĕш стр.).**

Лесничий Б. Хрусталевчĕ, пулăшаканĕ вара пуян опытлă С. Н. Николаевчĕ. Эпĕ мастер пулнă май манпа пĕрле 5 лесникчĕ. Тепĕр мастерăн тата 5 вăрманçăччĕ. Вăт çак йышпа эпир Малиновка лесничествине ура çине тăратма пуçларăмăр. Вăхăт иртнĕçемĕн Малиновка лесничестви Опытлă вăрман хуçалăхĕнче тăрăшуллă ĕçĕпе ырă ят çĕнсе илчĕ.

**– 30 çул каяллахи шартлама сивĕ хĕл вăрмансене пысăк шар кăтартрĕ: юмансем нумай сиенленчĕç. Вăл сухатусене саплаштарма мĕнлерех вăй çитерсе пытăр?**

– Эсир каланă хĕл кунĕсем хыççăн вăрмансене массăллă касасси тата çĕнĕ вăрмансене пысăк лаптăксем çинче лартса хăварасси вăй илчĕ. Вăл вăхăтра чирлĕ юмансене касас ĕçе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем активлă хутшăнчĕç. Вĕсемех пире çĕнĕ юманлăхсем лартма та çĕрне самай уйăрса паратчĕç. Çапла вара хуçалăхсен çĕрĕсем çине çуллен 50-шар гектар вăрман лартаттăмăр тата хамăр вăрман территорийĕнче – 40-50 гектар. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен çĕрĕсем çинче никĕсленнĕ вăрмансенче, тĕпрен илсен, хурăнпа çăка, чăрăшпа хыр вырăн тупатчĕç пулсан, вăрмансенчи лаптăксенче ытларах юманпа çăкана çул параттăмăр. Çав çулсенче юманлăхсем чĕртесси пирĕн тĕп ĕç пулчĕ. Çак ответлă ĕçе вăхăтра тата тивĕçлĕ шайра туса irттерни паян çамрăк вăрмансем çине киленсе пăхтарать. Кăçал кăна эпир 7,9 гектар юманлăх никĕсне хывса хăвартăмăр. Лесничествăри вăрман хуçалăхне çĕнетсе йĕркелессинче юлашки çулсенче кунта лесничий пулнă Анатолий Петрович Яковлевăн тӳпи те пĕчĕк мар. Шăпах çав çулсенче Малиновка лесничествин бази тĕрекленсе çитрĕ те.



**А. Касьянов лесничий (сулахайри) Р. Царева, В. Николаев мастерсемпе.**

**– Калаçу ĕçлекенсем çине çитнĕрен тата камсене ырăпа асăнма пултаратăр? Вăл çулсенче паянхи Ильинка лесничестви икĕ лесничествăран тăнă пулать-çке. Эсир вара Малиновка лесничествинче ĕçленипе пĕрлех чылай хушă Ильинка лесничествине те ертсе пытăр. Апла сирĕн паянхи лесничество ĕçченĕсемпе ветеранĕсем çинчен калас сăмахăр та пысăк пулмалла.**

– Хамăр енри юманлăхсене чĕртессипе лесничествăсем çине уйăрмасăр кам епле ĕçленине çапла палăртассăм килет. Çак ĕçре тăрăшсах пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлнă А. Селюшкин, В. Анисов, Н. Пантелеймонов вăрманçăсем хăйсем хыççăн ырă ят хăварчĕç, кайран ĕçленĕ тата паян та вăрман хуçалăхĕнче тимлекен Г. Флегонтов, В. Николаев, С. Николаев, И. Игнатьев, В. Голубев, В. Колбасов, М. Моисеев, Л. Николаев лесничествăн тĕсĕ пулса тăраççĕ.

Пурнăç улшăннă май паян 2007 çулхи пуш уйăхĕнче йĕркеленнĕ 10316 гектар йышăнакан пирĕн участок лесничествинче халĕ В. Николаев, Р. Царева, М. Жигалов мастерсемпе манăн пулăшакан В. Таймаскин ĕçлетпĕр. Çак йышпа вăрмансене сыхлатпăр. Ку вăл – пирĕн паянхи тĕп тивĕç.

Пĕрлехи тимлĕхпе пирĕн паян та пурнăçламалли ĕçсем сахал мар. Çĕнĕ йĕркелӳпе килĕшӳллĕн паян эпир касмалли вăрмана уйăрса паратпăр тата касни вырăнне çамрăк вăрман çитĕнтеретпĕр, паян пур вăрмана сыхлатпăр, касакансен ĕçне хаклатпăр. Вăрмана пăхса тăма пире паян районти йĕрке хуралçисемпе вăрман хуçалăхĕнче унччен ĕçленĕ вăрманçăсем, пушар хуралĕнче вăй хуракансем, массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсем, шкул ачисем нумай пулăшаççĕ. Халăх пуянлăхне халăхпа сыхламалла та ĕнтĕ.

**– Шкул ачисем терĕр те, кунта хăш шкул коллективĕсене ырăпа палăртма пултаратăр?**

– Никама та айккинче пăрахса хăварас килмест. Çапах та вăрманçăсен профессионаллă уявĕ умĕн манăн паян уйрăммăн илсен Чуманкасси, Йӳçкасси, Муркаш, Мăн Сĕнтĕр, Çатракасси, Кашмаш, Москакасси, Калайкасси, Юнкă шкулĕсене ырăпа палăртса хăварас килет.

Эпир паян – вăрман хуçалăхĕнчи çĕнĕ структура. Пирĕн истори çук темелле, малашлăх кăна. Анчах вăрман аталанăвĕшĕн иртнĕ çулсем пурпĕрех асран тухмаççĕ. Май килнипе усă курса вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ ветерансене, вăрман хуçалăхне аталанма пулăшнисене тата халĕ те çак ĕçрен айккинче тăманнисене, паян вăрман хуçалăхĕнче вăй хуракансене, вĕсен çемйисене, вăрман хуçалăхĕн аталанăвне пысăк тӳпе хуракан шкул ачисене Вăрман хуçалăхĕн ĕçченĕсен кунĕпе саламлатăп, ырлăх-сывлăх, пуçăннă ĕçсене вĕçне çитерме телей те ăнăçу сунатăп.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Газпа усă куракансене асра тытма тата пĕлме**

# Тимлĕхе çухатни хакла ларĕ

***Паян пирĕн пурнăçра çут çанталăк газĕ тĕп вырăн йышăнчĕ: пӳрт-çуртне те унпа ăшăтатпăр, апат-çимĕçне те унăн пулăшăвĕпе хатĕрлетпĕр т. ыт . те. Апла пулсан ун тĕлĕшпе асăрханулăхпа тимлĕх те çӳллĕ шайра пулмалла. Çакна пĕлетпĕр, анчах чылай чух пăхăнмастпăр, йĕркене пăсатпăр. Ку вара пĕр çыншăн çеç мар, кӳршĕсемшĕн те хăрушлăх кăларса тăратать. Район хаçачĕн экономика пайĕн редакторĕ Анатолий БЕЛОВ шăпах хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе тĕл пулса калаçнă та ĕнтĕ «Чувашсетьгаз» уçă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн ертӳçипе Решит Халиуллович ЧЕБЕНОВПА.***

**– Хăрушсăрлăх ыйтăвне хускатнă май мĕнле лаптăк йышăнать-ха паян районта çут çанталăк газĕ?**

– Пурнăç улшăнăвĕсемпе тан пырса Муркаш районĕ республикăра пуринчен малтан тăван ене газификацилес ĕçе пĕтĕмĕшле вĕçлерĕ. Газ пирĕн пурнăçра шанчăклă пулăшакан пулса тăчĕ. Çакна ырламалла кăна, анчах манма юрамасть: çут çанталăк газĕпе йĕркене пăсмасăр усă курсан çеç сăн-питре телей шевли вылĕ, хăрушлăхсем хыçала юлĕç. Çут çанталăк газĕпе йăлара усă куракансем, унпа харпăр хăй çурчĕсемпе хваттерĕсене хутса ăшăтакансем газ оборудованийĕпе тата приборĕсемпе хăрушлăхсăр усă курмалли инструкцисене яланах туллин пурнăçласа пырассишĕн ответлă пулса тăраççĕ. Çавна тивĕçлĕ шайра тытса тăрассишĕн пуçларăмăр та ĕнтĕ паянхи калаçăва.

**– Мĕнле асăрхаттарусем вырăнлă-ха газ хуçалăхĕнче? Хĕл кунĕсем пуçланас умĕн хăшĕсем çине ытларах тимлĕх уйăрмалла?**

– Питĕ вырăнлă ыйту. Умра – пӳрт-çуртсемпе хваттерсене хутса ăшăтмалли тапхăр. Ку вăл пирĕншĕн те, кил-çурт хуçисемшĕн те, харпăр хăй предприятийĕсен котельнăйĕсене тытакансемшĕн те питĕ яваплă самант. Котельнăйсем пирки калас пулсан, вĕсене ĕçлеттерме «Чăвашрегионгаз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран ирĕк илмелле. Ăна валли асăннă предприятире газ хуçалăхĕпе ĕçлеме приказпа яваплăх хунă çын пулмалла, вентиляци каналĕсемпе газ мăрийсене пушар хуралĕ тĕрĕсленин акчĕ пулмалла. Котельнăйра газ тухнине палăртакан сигнализатор тата ăна тĕрĕсленин свидетельстви кирлĕ. Ял çыннисен е хваттер хуçисен вара газ приборĕсене таса та юсавлă тытасси çине тимлĕх уйăрмалла. Кил хуçалăхĕнче газ плитисене тата кăмакисене харпăр хăй тĕллĕн вырнаçтарассинчен тата газпа çыхăннă ытти ĕçсене ятарлă служба пулăшăвĕсĕрех пурнăçлассинчен пăрăнмалла. Ку вăл – чрезвычайлă лару-тăру патне илсе пыракан çул-йĕр. Пӳлĕмре газ шăрши тухсан çийĕнчех газ приборĕсемпе усă курма пăрахмалла, приборсен кранĕсене хупмалла, форточкăсене е чӳречесене уçмалла, 04 е 60-2-24 телефонсемпе газ хуçалăхне шăнкăравласа пĕлтермелле.

**– Баллонсенче сутакан шĕвек газпа усă куракансем те пур-ха...**

– Çапла, анчах паянхи куна вĕсене ирĕклĕн сутма чарнă. Кунта та тимлĕх малти вырăнта пулмалла. Баллонсене «Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕнче регистрациленнĕ çынсене кăна параççĕ. Каласа хăвармалла, газ баллонĕсене хĕвел ӳкекен тата вĕри тивекен вырăнсенче упрама та, вырнаçтарма та юрамасть. Вĕсене путвалсенче пачах упрамалла мар.

**– Паян «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн ĕçченĕсем ялсенче техобслуживани ыйтăвĕсемпе çӳреççĕ. Техобслуживанишĕн 400 тенкĕ ытла укçа тӳлемелле пулнăран ялта пурăнакансем вĕсене киле кĕртмен тĕслĕхсем те çук мар. Кăна епле хакламалла?**

– Çапла, ял çыннисем пирĕн ĕçе тата хăйсен хăрушсăрлăхне шута хуманран ку ĕçĕн кăткăслăхĕ пирки уйрăм калаçу. Техобслуживание эпир çут çанталăк газĕпе усă куракანпа тунă килĕшӳ тăрăх пурнăçлатпăр. Саккунсем улшăнни кунта та пире çирĕпрех пулма ыйтать. РФ Правительствин 2006 çулхи çу уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 307-мĕш номерлĕ постановленийĕпе çирĕплетнĕ «Граждансене коммуналлă услугăсем парассин правилисемпе» килĕшӳллĕн газпа усă куракан тивĕçĕ – килти газ оборудованийĕн техника лару-тăрăвне тивĕçлĕ шайра тытса пырасси тата хăрушсăрлăха пăхăнасси. Эсир калашле, киле кĕртменни вара кил хуçи газпа усă курас йĕрке пирки иккĕленӳ çуратарать. Кун пек чух асăннă постановленин 96-мĕш пункчĕнче каланă пек маларах çырса пĕлтермесĕрех çав гражданина газ парассине чарма ирĕк пур. Правилăпа килĕшӳллĕн кил хуçисем газ приборĕсене техника енчен пăхса тăма килĕшӳ тума тивĕç. Ăна туманнисене уведомлени парса хăваратпăр. Уйăх иртсен, кил хуçисем вырăнтан тапранмасан, РФ Правительствин 307-мĕш номерлĕ постановленийĕн 80-мĕш пункчĕпе кил-çурта пыракан газа хупса лартатпăр. Ăна тепĕр хут ярасси вара пысăк укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çавăнпа та техобслуживанирен пăрăнманни – саккуна пăхăнса хăрушсăрлăх тата перекет çулĕпе пыни.

Юлашки вăхăтра çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче кил-çуртсенче газ тĕлĕшпе пулнă инкексем çут çанталăк газĕ çине тимлĕрех пăхма ыйтаççĕ. Çитменлĕхсем пулсан вĕсене вăхăтра пĕтермелле, тĕрĕслеме тата кăлтăксене пĕтерме чăрмавсем тумалла мар.

**– Решит Халиуллович, ăнлантаруллă калаçушăн пысăк тав. Сирĕн сăмахăрсене район çыннисем, çут çанталăк газĕпе усă куракансем ăнланасса шанатăп.**

**Район 65 çул тултарнă май**

# Халăх сывлăхне мала хурса

...Константин Федорович паян та, ытти кунсенчи пекех, çемьере пуринчен маларах вăранчĕ. Анчах темĕн вăл паян ытти кунхи пек хыпкаланмарĕ. Паян ир тумалли чылай ĕçсене ĕнер каç туса хунăранах-ши е тутлă ыйхă тыткăнĕнчен уйрăлас мар тесе-ши, çулсем иртнине пăхмасăрах, çамрăклăха сыхласа хăварнă арçын шухăша путрĕ. Куç умне иртнĕ çулсем, район аталанăвĕн утăмĕсем, районти сывлăх сыхлавĕн ӳсĕмĕсем тухрĕç. Ара çакăнта унăн тӳпи те пур-çке, анчах хăйне нихăçан та мала хума хăнăхман К. Ярухин паян та хăйĕн ĕçтешĕсем, юлташĕсем пирки ытларах шухăшларĕ. Урăхла пултараймасть те вăл...

Пĕрремĕш хут пуçа фармацевт пулас шухăш пырса кĕрсен шутланă-и-ха Тутарстан Республикинчи Çĕпрел район ачи ĕç ĕмĕрне Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнче Йӳçкасси ял аптекинче irттеретĕп тесе. Паллах, ун пек шухăш пулма та пултарайман. Анчах чирлĕ çынсене вăхăтра пулăшасси, вĕсене эмелпе тивĕçтерсе тăрасси çирĕп тымар янăччĕ ĕнтĕ ун чухне шкул пĕтерес çул çине тухнă яш чĕринче. Пурнăç çулĕ тумхахлă тенĕ пек Костьăн çамрăк ĕмĕчĕ те часах пурнăçа кĕреймерĕ. Автозаводра та хăй ĕç вырăнне шырарĕ, Совет çарне те кайса килчĕ, анчах пур-пĕрех темĕн çитмерĕ ăна. Çапла вара пурнăç çулĕ малтуртăмлă çамрăка 1971 çулта Чĕмпĕрти фармацевтика училищин алăкне уçса парать.

– Хама тăван кимме лекнĕ пекех туйрăм. Кашни çĕнĕлĕх мана кунта çывăх туйăнатчĕ, хăйĕн патне астаратчĕ. Кунти пĕлӳ мана пурнăç çине те тимлĕрех пăхма вĕрентрĕ, çынсемпе кăмăллă та тарават пулма хавхалантарчĕ. Паян хам пурнăçăма фармацевтикăпа çыхăнтарнăшăн эпĕ пĕртте кулянмастăп, – сасă хăпартмасăр тантăш пек кăмăллăн калаçать сумлă пĕлĕшĕм.

1973 çулта ятарлă вăтам пĕлӳ илнĕ 24 çулхи çамрăка шăпа пӳрнипе Муркаш районĕнчи Йӳçкасси салинчи 67-мĕш номерлĕ аптекăна ертсе пыма шанаççĕ. «Ют вырăн, палламан çынсем, хăçанччен ĕçлемелле-ши кунта? Хамăр еннелле ĕç вырăнĕ тупăнĕ-ши? Унталла «тарма» пулмĕ-ши», – сахал мар пуç ватнă ӳссе çитнĕ çамрăк. Анчах шаннă ĕçе вĕçне çитерме ачаран вĕренни çĕнтернĕ, Константин Федорович Йӳçкасси çынни пулса тăнă.

Кăçал Муркаш районĕ 65 çул тултарчĕ. Çак пысăк историре Йӳçкассисем те йĕр хăвармасăр пулман. Кунти аптека 1963 çулта уçăлнă. Уçăлнă та ку тăрăхшăн хăйне евĕр васкавлă пулăшу вырăнĕ пулса тăнă. Çитмĕлмĕш çулсенче йывăр чирлĕ çынсем те, профилактика тăвас ĕмĕтлисем те кунта Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи 13 ялтан çеç мар, Элĕк районĕнчи çывăх ялсенчен те тăтăшах çӳреме пуçланă. Вăрманкассинчи, Матьăкри, Панклири фельдшер пункчĕсенчи аптекăсем те ял халăхĕшĕн пулăшу пулнă ĕнтĕ, анчах çынсем Йӳçкассинех туртăннă. Çак туртăнура кунта ĕçлеме пуçланă çамрăк каччăн тăрăшулăх тӳпи те пулнах-тăр. Курнă ял çыннисем вăл тимленине.

Çĕнĕ вырăнта ĕçлеме пуçласанах К. Ярухин çынсене эмел курăкĕпе тивĕçтерме пуçланипе пĕрлех эмел курăкĕсем пухас ĕçе пуçарса ярать. Вунă çула яхăн аптека эмел курăкĕ пухассипе малта пыракансен шкулĕ пулса тăрать. 1982 çулта Йӳçкассинчи вăтам шкул эмел курăкĕ пухассипе Раççей Федерацийĕнчи ăмăртура иккĕмĕш вырăна тухать, икĕ ача «Артек» лагере кайса канса килет, 4-5 ача республикăри лагерьсене кайма путевкăсем çĕнсе илет.

Çын ĕçпе илемлĕ тени К. Ярухин тĕлĕшпех. Аптекăна малтисен ретĕнчех тытса пынă Константин Федоровича 1984 çулта «СССР сывлăха сыхлас ĕç отличникĕ» паллăпа, «Чăваш АССРĕн сывлăх сыхлавĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парса чысларççĕ. Ырă ята тивĕçнĕ ĕçчен унччен рех (1980 çулта) рационализаторла сĕнӳпе те палăрать. «Устройство для контроля за реализацией препаратов с ограниченным сроком годности» – унăн ĕçĕ. 1984 çултах вăл вăхăтри социализмла ăмăртусенче тăтăшах малти вырăнсене йышăннă тăрăшуллă фармацевта Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Хисеп грамотипе наградăлаççĕ.

Константин Федорович Ярухин авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнче 60 çул тултарать. Харпăр хăй мĕн тунине тишкермелле ĕнтĕ, анчах халăхпа ĕçлеме хăнăхнă фармацевт пурпĕрех юлташĕсем пирки шутлассине мала хурать. Акă паян та вăл пĕр вăхăтра ĕçленĕ, йывăрлăхсене пĕрле çĕннĕ ĕçтешĕсене мухтаса аса илет.



– Вĕсем çумра пулман тата вăхăтра хавхалантарман пулсан манăн ӳсĕмсем те сахалрах пулнă пулĕччĕç. Турайри апткекăна ертсе пынă Мария Федоровна Чернышева, Мăн Сĕнтĕр аптекин заведующийĕ пулнă Зоя Васильевна Маринкина, Муркашри 13-мĕш номерлĕ аптекăн ертӳçи Зоя Григорьевна Любимова **(сулахайран сылтăмалла, иккĕмĕшĕ – К. Ф. Ярухин)** паян та маншăн ырă тĕслĕх, – терĕ ĕçтешĕсемпе пĕрле 1986 çулта ӳкерттернĕ сăн ӳкерчĕке ман ума хунă май К. Ярухин.

Сывлăх хуралĕнчи маттур обществăлла ĕçре те маххă памасть. Миçе çул ĕнтĕ вăл ял старости, участокри суйлав комиссийĕн председателĕ тата ялти активист. Ун тавра яланах ырă кăмăллă çынсем, малтуртăмлă шухăшсем, аталанăва никĕслекен çĕнĕлĕхсем.

**А. БЕЛОВ.**